# выльăх-чĕрлĕх пăхакансен кунĕ

## Ĕмĕтсем малаллах Ильичсен

Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх районта ура çинче çирĕп тăракан хуçалăхсенчен пĕри. Лару-тăру мĕнле пуласси йăлтах ĕçе епле йĕркеленинчен килнине, кун пек чухне кадрсен проблеми çуккине кунта конкретлă тĕслĕхсемпе çирĕплетме пулать. Илер-ха, Кĕртекассинчи сысна фермине. 3 çул каялла районта чи кайра пыракан коллектив паян чи малта çĕмĕрттерсе пырать. Çурасен талăкри вăтам ӳт хушаслăхĕ 152 грамм пулнă пулсан, паян самăртмалли ушкăнра кăтарту 478, 2–4 уйăхри çурасем патĕнче 421 грампа танлашать.



Вăрттăнлăхĕ мĕнре тетĕр-и? 1964-мĕш çулсенче тунă сарайсем иртнĕ çулччен нимĕнле юсав витĕр тухманскерсемччĕ. Пĕлтĕр вара "АПК аталантарасси" наци проекчĕпе килĕшӳллĕн илнĕ 998 пин тенкĕпе икĕ уйăхра сарайне реконструкцилесе хута ячĕç. Паян кунта пĕтĕмпе 1100 пуç. Сысна пăхнă çĕрте 4-ăн ĕçлеççĕ. Пĕтĕмпе вара коллективра 12-ĕн. Çулталăк çурă ĕнтĕ кунта сыснасене типĕлле тăрантараççĕ. Ĕç условийĕсем лайăхланчĕç. Ăнăçу вăрттăнлăхĕ пирки хуçалăх ертӳçи Игорь Васильевич Николаев тата, ак, çапла ăнлантарать:

–Ферма заведующине улăштарма лекрĕ.

Виççĕмĕш çул ĕнтĕ асăннă коллектива Нина Ивановна Иванова ертсе пырать. Иртнĕ çул вăл сысна ĕрчетес ĕçе çĕнĕлĕхсем кĕртнĕшĕн "Районти чи лайăх ферма заведующийĕ" ята çĕнсе илчĕ. Ĕмĕрĕпех ферма ĕçĕпе пурăнаканскер, икĕ ачине те ĕçре пиçĕхтерчĕ. Асли халь салтакра ĕнтĕ. Кĕçĕнни вара, 5 класра вĕренекенни, çулла ферма сыснисене пăхать. Хăй ачисене çеç-и çак ĕçе явăçтарать вăл?

– Кунта ĕçлекенсен пурин ачи-пăчине те çулла веçех сысна пăхма кăларса яратăп, - тет вăл.

Çакăнтанах ачасем ферма ĕçĕ çумне çыпăçаççĕ-çке. Пĕр хăнăхнă ĕçрен уйрăлма çуккине кунта ĕçлекенсем хăйсемех лайăх пĕлеççĕ. Коллективра пурте 20 çул ытла ĕçлекенсем. Апполинария Витальевна Клементьева, ав, хăй сысна пăхать. Мăшăрĕ, Федор Петрович, кунтах выльăх апачĕ турттарнă çĕрте тăрăшать. Самăртмалли ушкăнра ĕçлекен Маргарита Клементьевна Васильевана, амасем патĕнче вăй хуракан Андрей Аркадьевич Михайлова, Галина Валентиновна Арсентьевана, Надежда Владимировна Макарована, тислĕк кăларнă çĕрте ĕçлекен Анатолий Петрович Васильева тата ыттисене епле ырăпа асăнмăнха. Коллектив çитĕнĕвĕ кашнин тӳрĕ чунлă ĕçĕнчен пуçтарăнать вĕт.

Хуçалăхри кашни фермăри ĕçчен маттур кунта. Купăрляри сĕт-çу ферминче ĕне сăвакан Зинаида Михайловна Семеновах илер-ха. 8 класс пĕтернĕ хыççăнах фермăна пырса кĕнĕ Етĕрне район хĕрĕ. Купăрля тăрăхне качча килсен те юратнă ĕçех кӳлĕннĕ. 26 çул фермăра иртнишĕн пĕрре те кулянмасть. Шутласассăн, ачасем çитĕннĕ, нушаланмасан та юрать теме те пулать пулĕ, анчах Зинаида Михайловнан пуçне кун пек шухăш пырса та кĕмест. Иртнĕ çул вăл кашни ĕнерен 4031 килограмм сĕт сурĕ. Мăшăрĕ Николай Петрович та кунтах операторта ĕçлет.

– Фермăран уйрăлаймастăн ĕнтĕ эс, -тет Николай Петрович тепĕр чух шӳтлесе. Пĕр вăхăт Зинаида Михайловна 53 пуç ĕнене пĕччене сурĕ.

Халĕ 2-мĕш çул ĕнтĕ кунта тепĕр дояр Николай Алексеевич Иванов вăй хурать. Пĕлтĕр вăл хăйне шанса панă кашни ĕнерен 4184 килограмм сĕт суса илчĕ. Мăшăрĕ Юлия Афанасьевна хуçалăхра осеменаторта ĕçлет.

– Хĕрарăм ĕçне ма суйларăм-ши тесе ӳпкелешместĕри?- тесе ыйтсан, Николай Алексеевич кăмăллăн хирĕçлесе пуçне сулать. 1989 çултанпах фермăра тĕрлĕ ĕçре вăй хунăскер, хăйне кунта килти пекех туять: хăнăхнă ĕçсĕр епле-ха? Куллен ку фермăра паян кашни ĕнерен 16-17 килограмм сĕт сăваççĕ.

Уйкас Янасалти ĕне ферминче вăй хуракансем те вуншар çултан хăйсем выльăх-чĕрлĕх сферинче нумай çул вăй хунипе мăнаçланасса шанас килет. Паян кунта ĕçлекенсен фермăри ĕç стажĕ – 5–12 çул. Пултаруллă ĕçченсем çитĕнӳ çулĕпе шатăртаттарса çеç пыраççĕ. 35 çынран тăракан коллективра дояркăсем 8-ăн. Пурĕ унта 440 пуç. Иртнĕ çул 6 доярка 4 пинлĕ чикĕрен каçрĕç. Лидия Кимовна Петрова, Мария Ивановна Павлова, Галина Григорьевна Федорова, Рената Аркадьевна Терентьева, Светлана Леонидовна Федорова, Тамара Витальевна Платонова. Сĕт сивĕтмелли оборудовани илнĕрен вара кунта сĕте пĕрремĕш сортпа сутаççĕ. Кăçал вара асăннă фермăра ĕне сумалли зал тума пуçласшăн. Купăрля тăрăхĕсем ку çĕнĕлĕх те кăтартăва чылай хăпартма пулăшасса пĕлеççĕ. Çапла пултăр тесе хăйсенчен килнине йăлт тăваççĕ. Ыран паянхинчен ӳсĕмлĕрех ĕçлеме тĕллев лартаççĕ.

**Сăн ӳкерчĕкре: Н.И. Иванова ертсе пыракан Кĕртекассинчи сысна ферминче.**

## «Ударниксемшĕн» 5 пин те ним те мар

«Ударник» хуçалăхра вара дояркăсем иртнĕ çул 5 пинлĕ чикĕрен те каçрĕç. Панкли ферминче вĕсем 4-ăн. Галина Леонтьевна Васильева, акă, 5087 килограмм сĕт суса илчĕ.

Зоя Степановна Андрееван кăтартăвĕ 5399 килогрампа танлашать. Амăшĕ фермăра ĕçленĕ май, унăн 2-мĕш класра вĕреннĕ чухнех пĕр ушкăнри ĕнесене хăй пĕччен суни те пулнă. Ашшĕ те выльăх пăхнă çĕрте ĕçленĕ май, хĕр ачин ĕçне пăхса савăнатчĕ. Зоя Степановна паян хăйне ашшĕпе амăшĕ выльăхсем патне çыпăçтарнă пекех хăйĕн ачисене те çак ĕçе хăнăхтарса ӳстерчĕ. Аслă хĕрĕ зоотехника вĕренет, тепĕр хĕрĕ те амăшĕн çулĕпех кайрĕ: фермăра ĕçлет.

Асăннă фермăра вăй хуракан Наталья Леонидовна Варламова, Евдокия Яковлевна Гаврилова та иртнĕ çул кашни ĕнерен 5 пин ытла килограмм сĕт сурĕç.

Тепĕр 5 доярка та вĕсем хыççăнах хăвалаççĕ: 4 пинлĕ чикĕрен каçрĕç. Римма Аркадьевна Магомедова, ав, 4629 килогрампа танлаштарчĕ кăтартăва. Çитĕнӳ вăрттăнлăхне вăл пахалăхлă выльăх апатĕнче курать. Паллах, коллектив тăрăшулăхĕ те малти шайрах.

Валентина Германовна Трофимова çинче те уйрăмăнах чарăнас килет. 8 класс хыççăнах ферма ĕçне кӳлĕннĕскер, 30 çул ытла юратнă ĕçре. Виçĕ ача çитĕнтерсе, пĕринпе те килте ларман вăл. Иртнĕ çул хăйне çирĕплетнĕ кашни ĕнерен 4774 килограмм сĕт сурĕ. 2002 çулта "Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ" ята çĕнсе илчĕ.

Ку фермăри Елена Михайловна Алексеева, Зоя Ивановна Михайлова, Валентина Федоровна Васильева та кăçал 5 пинлĕ чикĕ патне татах та çывăхарах пыма ĕмĕтленеççĕ.

Вăрманкасси ферми çине куççан вара калаçăва Роза Платоновнăпа Геннадий Яковлевич Яковлевсенченех пуçлас килет. 5 пинлĕ чикке вĕсем 35 килограмм çеç çитеймерĕç. 1980 çултанпах фермăра вĕсем. Паян аслашшĕпе асламăшне хуларан яла килсен мăнукĕ те пулăшать: тислĕк хырса парать.

Софья Алексеевна Иванован, ав, пĕр ачи пурнăç çулне амăшĕ пекех фермăпа çыхăнтарма шутларĕ. Софья Алексеевна 4577 килограмм сĕт сурĕ пĕлтĕр кашни ĕнерен. 10 çул фермăра ĕçленĕ хушăра çĕршыв наградине те тивĕçрĕ. Çавăн пекех Лидия Петровна Алексеева, Надежда Георгиевна Алексеева, Валентина Филипповна Алексеева та кашни кунах пĕчĕккĕн кăçал 5 пинлĕ чикĕ патне ăнтăлаççĕ.



Панклисем паян талăкра вăтамран кашни ĕнерен 13 килограмм çурă сĕт сăваççĕ пулсан, Матьăксен вăл 16 килогрампа танлашать. Матьăк ферминче виçĕ дояркăран иккĕшĕ вара иртнĕ çул 5 пинлĕ чикĕ урлă каçрĕç. Сăмах кунта Ирина Михайловна Мироновапа Евдокия Яковлевна Гаврилова пирки пырать. Евдокия Яковлевна мĕн качча тухнăранпах 19 çул ĕçлет фермăра. Çакăншăн пĕрре те ӳкĕнмест. Ирина Михайловнан ушкăнĕ халĕ Валентина Владимировна Павлова çинче. Пĕчĕкренех ашшĕ-амăшĕпе фермăра ĕçленĕскер, ферма таврашĕнчех ĕçлерĕ. Ирина Михайловна çĕнсе илнĕ чикĕрен вăл каялла чакма шутламасть. Халиччен дояркăсене улăштарса ĕне сунăскер, ӳсĕм çăл куçĕ хăйĕн тăрăшулăхĕнчен килнине те лайăх ăнланать.

Елизавета Леонидовна Александрова фермăра 5 çул кăнаха, апла пулин те иртнĕ çул кашни ĕнерен тата 17 килограмм сĕт сунă пулсан, 5 пине çитеретчĕ кăтартăва. Хăйĕн пĕр хĕрне вара çак хушăра ферма ĕçне юратма вĕрентрĕ те:

-Шкул хыççăн фермăна юлас ĕмĕтлĕ вăл, - тет. Елизавета Леонидовнан мăшăрĕ Владислав Александрович та кунтах выльăх пăхнă çĕрте тăрăшать.

Ферма ертӳçи Юлия Альбертовна Иванова та кăмăллă коллектив ĕçĕпе, пĕр-пĕрне ăнланса вăй хунине мĕн çиттĕр?

Йӳçкассинчи сĕт-çу ферминче 4 пинлĕ чикĕрен иртнисем виççĕн. Вĕсем: Альбина Вениаминовна Тихонова, Василиса Апполинаровна Сергеева тата Вячеслав Иванович Сергеев.

**Сăн ӳкерчĕкре: кашни ĕнерен 5 пин ытла сĕт сунă З.С. Андреева, Г.Л. Васильева, Е.Я. Гаврилова.**

## Ĕçлес кăмăл кашнин пысăк

Çамрăксем фермăна пырасшăн мартекен сăмахсем "Герой" хуçалăхри сĕт-çу ферми коллективĕ пирки марах. Шурчари сĕт-çу фермин коллективĕ тивĕçлĕ канăва тухиччен нумай вăхăт кирлĕ-ха. Çулланнисен те çамрăксемпе юнашар иртнĕ çамрăклăх пирки шутлама вăхăт та, кăмăл та çук. Паян тăрăшуллă коллектив кунне кашни ĕнерен 17 килограмм сĕт сăвать. 32 çынран тăракан коллективри 8 доярка иртнĕ çул вăтамран кашни ĕнерен 4317 килограмм сĕт сурĕ. 7 доярка 4 пинлĕ чикĕрен иртрĕ. Сĕте кунта сивĕтсе 1 сортпа сутаççĕ. Ĕç укçи 4–5 пине ларать вăтамран уйăхра. Эппин, кунта кадр ыйтăвĕ тăманнинчен тĕлĕнме те кирлех мар пулĕ. Кăçал сĕт пăрăхĕ лартас ĕмĕтпе пурăнаççĕ Шурчасем. "АПК аталантарасси" наци проекчĕпе килĕшӳллĕн кредит илме хатĕрленеççĕ çак тĕллевпе. Хальлĕхе вара пĕтĕм ĕçе алă вĕççĕн тума хăнăхнă кунта. Ку никама та шиклентерменни дояркăсенчен кашниех ферма ĕçне ачаран хăнăхнипе çыхăннă пулĕ. Надежда Михайловна Борисова, акă, пĕчĕк чухнех ашшĕпе амăшне пулăшма фермăна çӳренĕ. Амăшĕ вăхăтсăр çĕре кĕрсен, 8 класс пĕтернĕ хĕр ача амăшне шанса панă ĕнесене хăй сума пуçлать. Çапла пуçланать унăн ĕç биографийĕ. Мăшăрĕ Леонид Петрович та фермăра слесарь-наладчик пулса ĕçлет. Надежда Михайловна пĕрре кăна мар ĕне сăвакансен районти конкурсĕнче малти вырăнсене йышăннă. Иртнĕ çул вăл кашни ĕнерен 4676 килограмм сĕт сурĕ. Унран ытларах сăваканни Лидия Михайловна Сорокина пулчĕ: 4709 килогрампа танлашать унăн кăтартăвĕ. Иртнĕ çул кашни ĕнерен 4386 килограмм сĕт сунă Наталья Вячеславовна Рыжкова **(сулахайри сăн ӳкерчĕкре)** ĕне сăвакан çамрăк операторсенчен иртнĕ çул районти конкурсра çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕ. Пурнăçне фермăпа çыхăнтарассинче амăшĕн тӳпи пысăккине палăртать. Халĕ те амăшĕ юнашарти сарайĕнче вăкăрсем пăхать. Пĕлтĕр 4 пинлĕ чикĕрен каçнă Лариса Алексеевна Андреева, Елена Витальевна Васильева, Ольга Витальевна Петрова, Вероника Владиславовна Степанова та кăçал кăтартăва палăрмаллах ӳстересшĕн. Ара, 5 пин 4 пинпе юнашарах-çке. Ытти нумай-нумай ĕçченпе пĕрле мĕнле-ха ырăпа асăнмăн паян хурала куçнă Галина Владимировна Леонтьевана. 26 çул фермăра дояркăра вăй хунă хушăра миçе хутчен ĕçтешĕсен хушшинче районти конкурсра мала тухмарĕ-ши? Районта çеç-и? Етĕрне районĕнче иртнĕ республикăри çакнашкал конкурсра 2-мĕш вырăн та йышăннăччĕ-ха. Паян Шурчасем ăнăçу çулĕпе малаллах утма тĕллев лартаççĕ. Çакна валли вĕсен чи малтан ĕçлес кăмăл пысăк, апат пахалăхĕ пирки тем ӳпкелешмелли çук, ĕнесем те пĕтĕленсе юлнă, кĕтĕве çĕнетессипе те сахал мар ĕçленĕ. Коллектив ĕçлеме пултараканскер. Тата мĕн кирлĕ çĕнтерӳ патне кайма?





Çĕньял Шурчари сурăх ферминче Светлана Алексеевна Иванова **(сăн ӳкерчĕкре)** 10-мĕш çул ĕçлет. Ферма тилхепине вăл ашшĕпе амăшĕнчен илсе юлнă. Ашшĕ ферма заведующинче, амăшĕ ĕмĕрĕпех сурăхсем пăхнă çĕрте ĕçленĕ. Халĕ фермăра 182 сурăх тата 200 путек. Паян та Светлана Алексеевна тулли кăмăлпа юратнă ĕçе утать.

## Килте те, ĕçре те пĕрле

"Восток" хуçалăхри Мулкачкассинчи сĕт-çу фермин коллективĕ те кӳршĕллĕ Орининсенчен юлмарĕ. Çак икĕ хуçалăха пĕр тăван Шишокинсем ертсе пыраççĕ пулсан, кăтартăвĕ те уйрăлсах тăмалла мар ĕнтĕ. Ку вара, чăн та, çаплах. Мулкачкассинчи ферма хĕрĕсем иртнĕ çул кашни ĕнерен вăтамран 4 пин килограмм ытла сĕт сурĕç. Анфиса Михайловна Наумован кăтарту 4354 килогрампа танлашрĕ, Регина Александровна Бычкован – 4194 килогрампа. Иккĕшĕ те малтан хулара санитаркăра ĕçленĕскерсем, пĕр тĕрлĕ шур халата тепĕр тĕрлипе улăштарнăшăн ӳпкелешмеççĕ. Анфиса Михайловнан мăшăрĕ Валериан Иванович та – дояр. Аслă ывăлĕ вара Сергей механизатор ĕçне суйларĕ, пĕлтĕр ЧР Президенчĕн стипендине илме тивĕç пулчĕ. Регина Александровнан мăшăрĕ те Валерий Владимирович фермăрах ĕçлет.

Тепĕр чух халăхра çапла каланине илтме пулать: мăшăрсен пĕр çĕрте ĕçлени кирлех мар пулĕ. Çак сăмахсем чăнлăхпа пĕр килменнине Мулкачкассинчи фермăра ĕçлекен мăшăрсем ырă тĕслĕхпе çирĕплетсе параççĕ. Ĕçре вĕсен ĕç кал-кал пырать пулсан, килте те пĕр-пĕринпе шăкăл-шăкăл пурăнни пирки пĕр иккĕленӳ те çук. Унсăрăн ĕç ăнман пулĕччĕ.

**Кăларăма В. ШАПОШНИКОВ, Л. ПАВЛОВА хатĕрленĕ.**